Анатолий ЮМАН

# АННЕПЕ ПĔРЛЕ ВĔРЕННĔ...

МИТТА Ваçлейĕ çинчен эпĕ чи малтан аннерен илтнĕччĕ. Манăн анне, Степанида Ильинична Ермилова /хĕр чухнехи хушамачĕ Туйбахтина/ Ульяновск облаçĕнчи Синкĕл районне кĕрекен Ялавăр ятлă чăваш ялĕнче çуралса ӳснĕ. Сăпани тесе чĕннĕ ăна ялта. Вăл кукаçейĕн аслă хĕрĕ пулнă. Ялти шкултан вĕренсе тухсан Чĕмпĕрти чăваш шкулне кайса кĕнĕ. Учительница ятне илнĕ хыççăн Ульяновск облаçĕнчи Ирçелне /халĕ Чăнлă районĕ/ янă. Унта пилĕк çул ĕçленĕ, качча кайнă. Атте Самарта рабфак пĕтерне хыççăн çамрăк мăшăра Чăвашкассинчи пуçламăш шкула янă. Унта аттепе анне хайсем çĕре кĕриччен ĕçлесе пурăннă.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи çулĕсенче анне çак пуçламăш шкула ертсе пычĕ. Общество ĕçне хутшăнчĕ. Хĕрĕх пĕрремĕш шартлама хĕл кунĕсенче, тăшман Мускав çывăхне пырса тухсан, ялти шкула тин çеç ĕçлеме килнĕ çамрăк учительницăпа Ольга Васильевна Нагорновăпа юнашар ларса час-часах фронтри йывăр ларутăрава сӳтсе яватчĕç. Калаçу теми вăрçăчченхи мирлĕ вăхăта та куçатчĕ. Вĕсене иккĕшне те уйрăмах Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренсе ирттернĕ çулсем çывăхчĕ. Ольга Васильевна, Ухсай Яккăвĕ вĕренекенĕ пулнăскер, ятлă-сумлă поэт çинчен каласа кăтартатчĕ.

– Пирĕн вăхăтра та талантлă поэтсем пурччĕ, – терĕ пĕррехинче анне ăна итлесе ларнă хыççăн. – Ехрем Иванĕ, Митта Ваçлейĕ... Эпĕ вĕсемпе пĕрле вĕреннĕ. Питĕ маттур, ăслă та çивĕч каччăсемччĕ. Пĕр-пĕр сăвă çуралнă хыççăн тăхтав вăхăтĕнче ăна парта çине улăхса тăрсах ăмăртмалла вуласа кăтартатчĕç. Йӳле янă кĕписене пурçăн çипрен явнă ярапаллă пиçиххи çыхса çӳретчĕç. Хăйсен çак тумĕ-юмĕпе те юлташĕсенчен уйрăлса тăратчĕç пирĕн поэтсем. Эпир иккĕшне те "поэт" тесех чĕнеттĕмĕр. Шел, каярах Ехрем Иванне "пуп ачи" тесе шкултан кăларса ячĕç. Митта шăпине пĕлместĕп...

1947 çулхи çулла хамăр ялтан вунă çухрăмра вырнаçнă Упи пасарне кайрăм. Çуран. Унта ял халăхĕ, тĕпрен илсен, çуранах çӳренĕ. Анне хушса янă япаласене туянкаланă хыççăн кĕнеке сутакан киоск умне чарăнтăм. Çавăн чух Н.Островскин "Хурçă мĕнле хĕрнĕ" ятлă чăвашла куçарнă романне, А.Пушкинăн "Капитан хĕрне", В.Маяковскин "Лайăх тени мĕн тени, япăх тени мĕн вăл?" ача-пăча сăввисен пĕчĕк пуххине, тутар классикĕн Г.Тукайăн, çаплах К.Ивановăн юмахĕсене, Петĕр Хусанкайăн "Çĕнтерӳ юррине", Ухсай Яккăвĕн "Сăсар çĕлĕкне", Л.Агаковăн "Партизан Муратне", В.Долговăн "Тĕлĕнмелле винтовкине" туяннăччĕ. Ун чухне эпир, кӳршĕри Кивĕ Улхашри çичĕ çуллă шкулта вĕренекен ачасем, "Ялав" журналта номертен номере çапăнса пыракан Л.Агаковăн "Ылтăн вăчăрине" сиктермесĕр вуласа пыраттăмăр. Хальхинче "Ялав" журналăн черетлĕ номерне те туянма тӳр килчĕ. Киле таврăнсан тӳрех ăна алла ярса тытрăм. Куç тĕлне кĕтмен çĕртен "Ехрем Иванĕн сăввисем" текен пысăк мар ярăм тĕл пулчĕ. Аннепе пĕрле вĕреннĕ поэтсенчен пĕри-çке ку!

– Анне, кунта акă Ехрем Иванĕн сăввисем те пур, – терĕм эпĕ ăна хамăн савăнăçа пытараймасăр.

Сăввисем ансат, хăвăрт асра юлаççĕ.
Пĕтрĕ вăрçă. Юлтăм сывă.
Кĕç эп таврăнăп киле.
Мăшăрăм çуратĕ ывăл,
Ятне хурăпăр Илле.

Шел те, вăрçă хыççăн поэт нумай пурăнайман. Митта пирки вара çаплах сас-хура пулмарĕ. Вăл литературăна таврăннине анне кĕтсе илеймерĕ. Вăрçă çулĕсенче йывăр чире кайнăскер 1951 çулта çĕре вăхăтсăр кĕчĕ.

Литературăра малтанхи утăмсем тума пуçланă хыççăн тин мана Митта Ваçлейĕпе тĕл пулса калаçма тӳр килчĕ. Ун чухне вăл "Тăван Атăл" журналăн яваплă секретарĕнче тăрăшатчĕ. Пичетре унăн сăввисем те, статйисем те тухсах тăчĕç. Пире, тин çеç çырма пуçлакан авторсене, унăн халăх пултарулăхне çывăх сĕтеклĕ чĕлхи, тăван чĕлхене хăюллăн хӳтĕлекен позицийĕ илĕртетчĕ. Литература чĕлхине вăл çĕнĕ сăмахсемпе терминсем те кĕртсе пычĕ.

Хамăн малтанхи сăвăсене эпĕ чи малтан "Ялав" журнала йăтса пынăран кӳршĕри "Тăван Атăл" редакцине сайра кĕрсе тухнă. Миттапа Союзсен çуртĕнчи фойере, вăл унта канма тухнă вăхăтсенче кăна тĕл пулкаланă. Çапах та пĕррехинче хамăн анне çинчен аса илтертĕм.

– Туйбахтина? Стеша? Ас тăватăп ара. Хитре хĕрччĕ. Пăртак уксахлатчĕ пулас. /Анне ача чухне пулат çинчен ӳксе урине хуçнă/.

Эпĕ кĕскен унăн малалли шăпи çинчен каласа кăтартрăм. Вăрах калаçса лараймарăмăр. Поэт таçта васкатчĕ, кайма пуçтаранчĕ. Çуллахи шăрăх урама иккĕмĕш хутри пусма тăрăх юнашар утса антăмăр. Митта, сыв пуллашса, Хĕрлĕ лапамри культурăпа кану паркĕ еннелле утса кайрĕ, эпĕ – тепĕр еннелле. Вăштăр çил унăн сарă çӳçне çамки çине шăлса антарчĕ. Поэт ăна, ăшшăн кулса, сылтăм аллипе якатса тӳрлетрĕ. Ку пирĕн юлашки тĕл пулу пулчĕ. Часах унăн кун-çулĕ вăхăтсăр татăлни çинчен пирĕн аякри яла та хурлăхлă хыпар килсе çитрĕ.